# Шелепи – сӳнми çăлтăр

**Ас тăватăп-ха: пирĕн килте Шелепин «Суйласа илнисем» кĕнеки пурччĕ. Эпĕ ăна шкула кайиччен /1940 çулта/ вуласа тухнăччĕ. Унта «Эссепе», «Уксах Тимĕр Пӳлере илни çинчен» халап поэмăсем пурччĕ. Кĕнеки çине аттене «Е.М.Симакова, асăнмалăх автортан» тесе çырнăччĕ.**

Эпир 1933-1938 çулсенче хальхи Самар облаçне кĕрекен Чаллăпуç районĕнчи Чăваш Эштепен ялĕнче пурăннă. Атте унти шкулта ачасене вĕрентнĕ. Хăш çулхине-тĕр, калаймастăп, Шелепи пирĕн патра пулнă. Вăл колхозниксемпе тĕл пулнă, хăйĕн сăввисене вуланă. Куçĕ курманран поэт хăйĕн мăшăрĕпе пĕрле çӳренĕ. Пирĕн патра икĕ каç выртнă.

Шелепи парнеленĕ кĕнекене эпĕ /1952 çулччен/ салтака кайиччен упрарăм.

Мереченте пире хирĕç Шелепин тăванĕсем, Иванпа Натали Маловсем, пурăнатчĕç. Натали мăн акка Шелепирен 2 çул аслăрах пулнă. Вăл Шелепипе пĕр тăванах е иккĕмĕш сыпăкри тăванĕ иккенне илтнĕ. Натали мăн аккапа Иван йысна хĕрĕсем Тарьепе /1899 ç./ Марье /1901 ç./ Шелепие кукка тенине ас тăватăп. Тарйин виçĕ хĕрччĕ. Вĕсем Свердловска куçса кайрĕç. Аслă хĕрĕ Ольга манăн тăван пиччепе Михаилпа пĕрлешрĕ. Вĕсен пĕр хĕрĕпе ывăлĕ пурăнаççĕ-ха. Ыттисем çут тĕнчере çук ĕнтĕ. Марйи Кивĕ Ӳселĕнче пурăнатчĕ. Унăн мăшăрĕ Николай 1944-1947 çулсенче пирĕн ялта колхоз председателĕнче ĕçлерĕ. Вĕсен хĕрĕ Нина Лениногорск хулинче тĕпленнĕ.

Мереченти шкул 1897 çулта уçăлнă. Унти пирвайхи учитель Александр Кузьмич Кузьмин пулнă. Вăл 1881 çулхи çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче Çĕрпӳ уесĕнчи Нăрваш ялĕнче çурални паллă. 1898 çулта Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарие экстерн йĕркипе пĕтернĕ. Мереченте тин уçăлнă шкулта ачасене вĕрентме тытăннă. Вăл Николай Полоруссовпа юлташлă пулнă. Николай Иванович Мереченте Маловсем патне час-часах килнĕ. Александр Кузьмин, Николай Полоруссов, Мăкшелĕнчен Чумаковпа Семенушкин /ячĕсене ас туса юлман/ т. ыт. те. Мереченте вăрттăн пухусем /революци шухăшлă/ ирттернĕ. Çакна полици сиссен Николай Ивановичпа Александр Кузьмич 1907 çулта ялтан тухса тарнă. Пĕр вăхăт чукун çул çинче ĕçленĕ. 1914 çулта Николай Шелепи Çĕпĕртен тăван ялне таврăннă. 1916 çулта ăна вăрçа илсе кайнă. Сывлăхĕ хавшак пулнăран часах килне янă.

Совет влаçĕн малтанхи кунĕсенчех Николай Шелепи халăх ĕçне хутшăннă. 1918 çулта чухăнсен комитечĕн председателĕн ĕçне пурнăçласа пынипе пĕрлех ял Совет секретарĕнче тăрăшнă.

Революци хыççăн Александр Кузьмин та Меречене килсе пĕр вăхăт ачасене вĕрентнĕ. Унăн кайранхи шăпи паллă мар.

Николай Иванович Полоруссов-Шелепи 1881 çулхи çу уйăхĕн 14-мĕшĕнче Çĕнĕ Ӳселĕнче /хальхи Аксу районĕ/ çуралнă. Унăн мăн аслашшĕ Ялак, мăн асламăшĕ Шелепи ятлă пулнă. Николай Иванович вара каярахпа мăн асламăшĕн ятне литературăри псевдоним вырăнне йышăннă. Вĕсем чăвашсен авалхи пурнăçне, юмах нумай пĕлнĕ. Мăн аслашшĕ каланă халап аслашшĕ, ашшĕ урлă Николай Иванович патне çитнĕ. Çапла çуралнă та «Эссепе», «Уксах Тимĕр Пӳлере илни çинчен», «Константинополь хулине туни çинчен чăваш ваттисем калани», Мереченчен ялĕнчен 3 çухрăмра вырнаçнă сăваплă вырăн Кăмака çăлĕ çинчен калана халапсем.

Ӳсси ялне 1697 çулта Узи тутар никĕсленĕ. Унта тутарсемпе чăвашсем пĕрле килсе ларнă. XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче кунти чăвашсемпе тутарсене ирĕксĕрлесе Сĕнче юхан шывĕнче тĕне кĕртнĕ. 70-мĕш çулсен вĕçнелле тĕне кĕмесĕр юлнă тутарсемпе чăвашсем Ӳселĕнчен пĕр çухрăм аяккарах çĕнĕ ял никĕсленĕ. Ăна Çĕнĕ Ӳсел /Яна Узи/, тĕп ялне вара Кивĕ Ӳсел теме тытăннă. Çĕнĕ Ӳсел çыннисене те – тутарсемпе чăвашсене – ирĕксĕр тĕне кĕртнĕ. Пугачев пăлхавĕ хыççăн Кĕтерне патша тутарсене мечĕтсем тума ирĕк парсан кунти тутарсем каллех хăйсен тĕнне ĕненме тытăннă. Чăвашсем вырăс тĕнĕпех юлнă. Шелепин мăн аслашшĕпе мăн асламăшĕ тĕне кĕмен чăвашсем пулнă.

1921 çулта вара Çĕнĕ Ӳселĕнчи чăвашсем уйрăлса тухса Беловка, Алексеевка, Федоровка ялĕсене никĕсленĕ.

■ **Виктор СИМАКОВ**